**Апрелĕн 1-мĕшĕнчен Раççейре социаллă пенсисене 10,3 процент тата федераци çăмăллăхне илекенсен уйăхри укçине 5,5 процент ӳстернĕ. Республикăри пенсисене ӳстерни çинчен паян тӳрĕ эфирта Раççей Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Алексеевна Кондратьева каласа парать. Радиоитлекенсем 62-38-18 номер çине шăнкăравласа ыйтусем пама пултараççĕ.**

<u>**Олег Прокопьев: Апрельтен пенсисене мĕнле йĕркепе ӳстернĕ?**</u>

<u>Роза Кондратьева:</u> «Раççей Федерацийĕнчи патшалăх пенсийĕсем çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн социаллă пенсисене кашни çул апрель уйăхĕн 1-мĕшĕнчен ӳстерееççĕ. Унăн индексĕ Раççейри пенсионерăн пурăнма кирлĕ укçа тăкак чи пĕчĕк виçин ӳсĕмĕнчен килет.

Правительство постановленийĕпе килĕшӳллĕн апрелĕн 1-мĕшĕнчен социаллă пенсийĕсене тата унăн шайĕнчен шутласа тӳлекен патшалăх пенсийĕсене 10,3 процент хăпартса шутларăмăр.

Республикăри 28 пин пенсионерăн «Раççей Федерацийĕнчи патшалăх пенсийĕсем çинчен» саккун йĕркипе тӳлекен пенсийĕсем ӳсрĕç.

**<u>Олег Прокопьев:</u> социаллă пенсисене тата çак виçерен шутлакан патшалăх пенсийĕсене камсене тӳлеççĕ?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Енчен те çыннăн тĕрлĕ сăлтавсемпе ĕç стажĕ çук е çителĕксĕр пулсан, ăна социаллă пенсипе тивĕçтерееççĕ. Вĕсен шутĕнче инвалид ачасем, тăрантарса усракана çухатнă ачасем, инвалидсем тата страховани пенсийĕ илме ирĕк çук 65 çула çитнĕ арçынсем тата 60 çула çитнĕ хĕрарăмсем.

Социаллă пенсинчен шутлакан патшалăх пенсийĕсем илекенсен шутĕнче Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисем, çар суранне пула инвалид пулнисем, вăрçă вăхăтĕнче пуçне хунă çар çыннисен тăлăх арăмĕсем, çар служби вăхăтĕнче пуçне хунă çар çыннисен ашшĕ-амăшĕсем, радиаци тата техноген катастрофисенче нуша курнă граждансем тата вĕсен çемйисен членĕсем.

**<u>Олег Прокопьев:</u> апрельтен республикăра пенси виçисем мĕн чухлĕ ӳсрĕç?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Социаллă пенсийĕсен виçи саккунпа çирĕплетнĕ тăрăх пурин те пĕр пек мар, çавăнпа ӳсĕмĕ те тĕрлĕрен. Тĕслĕхрен, 2-мĕш ушкăн инваличĕсен социаллă пенсийĕсем апрельтен 440 тенкĕ ӳсрĕç, 4769 тенкĕпе танлашрĕç, инвалид ачасен пенсийĕсем вара 1068 тенкĕ ӳсрĕç, 11,4 пин тенкĕпе танлашрĕç. Вăтамран илсен, апрельти ӳсĕм хыççăн республикăра социаллă пенси вăтамран 670 тенкĕ ӳсрĕ - 7,2 пин тенке çитрĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисен иккĕмĕш пенсийĕсем вăтамран 1100 тенкĕ ӳсрĕç, икĕ пенсин вăтам виçи 28,7 пин тенке çитрĕ.

Пенсисене тӳлеме республикăра уйăхсерен каякан тăкак 22 млн тенкĕ ӳсрĕ.

**<u>Олег Прокопьев:</u> федераллă çăмăллăх илекенсен тӳлев виçи мĕнле ӳсрĕ?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Апрелĕн 1-мĕшĕнчен федераллă çăмăллăх илекенсем уйăхри укçа тӳлевĕ тата социаллă пулăшу пуххи 5,5 процент ӳсрĕ.

Уйăхри укçа тӳлев виçине кашни категори валли саккунпа çирĕплетнĕ. Çавăнпа ӳсĕм тĕрлĕрен. Республикăра ку тӳлевĕн вăтам виçи 2 пин тенкĕпе танлашрĕ.

Социаллă пулăшу пуххи (соцпакет) пĕтĕм хакĕ апрелĕн 1-мĕшĕнчен 930 тенкĕ те 12 пуса çитрĕ. Çав шутра эмел пайĕ – 716 тенкĕ те 40 пус, санатори – курорт пайĕ – 110 тенкĕ те 83 пус, транспорт пайĕ – 102 тенкĕ те 89 пус.

Апрельти ӳсĕм хыççăн уйăхсерен тӳлевпе тата социаллă пулăшу пуххипе тивĕçтерме уйăхсерен каякан тăкак 10 миллион тенкĕ пысăкланчĕ.

**<u>Олег Прокопьев:</u> республикăра миçе федераллă çăмăллăх илекенсен тӳлевĕ ӳсрĕ?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Паянхи куна Чăваш Республикинче федераллă çăмăллăхĕ илекенсем 108 пине яхăн, вĕсенчен нумайĕшĕ ( 86 пин) – инвалидсем, унсăр пуçне Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçинче хутшăннисемпе вăрçă инваличĕсем,

çар ĕç ветеранĕсем, вăрçă ветеранĕсен тăлăх арăмĕсем, 1-3–мĕш ушкăн инваличĕсем, радиаци катастрофине пула нушана лекнĕ гражданĕсем.

<u>Олег Прокопьев:</u> **ытти çулсенче апрельтен ĕç пенсисене те хăпартатчĕç, кăçал ӳстермерĕç, çак мĕнпе çыхăннă?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Кăçалтан ĕç пенси вырăнне çĕнĕ саккунпа страховани пенсийĕ йĕркеленĕ. Ăна кашни çулах февралĕн 1-мĕшĕнчен иртнĕ çулта хаксем ӳснине кура хăпартаççĕ тата апрелĕн 1-мĕшĕнчен ĕç укçи шайĕ ӳснине пăхса Пенси фончĕн тупăшĕ инфляцинчен пысăкрах пулсан хушса ӳстереççĕ.

Акă кăçал та Правительство йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн страховани пенсийĕсене февралĕн 1 – мĕшĕнчен 11,4 % ӳстертĕмĕр. П**<u>енси коэффициенчĕн хакĕ</u>** 71 тенкĕ те 41 пуспа танлашрĕ, **<u>çирĕплетнĕ виçе</u>** - 4383 тенкĕ таран ӳсрĕ.

Пенси фончĕн тупăшĕ инфляци шайĕнчен пĕчĕкрех пулнă пирки апрелĕн 1-мĕшĕнчен страховани пенсийĕсене ӳстерме йĕрке çук.

<u>Олег Прокопьев:</u> **республикăра страховани пенсийĕ миçе çын илет, вĕсен пенсийĕсем кăçал мĕнле ӳснĕ?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Чăваш Республикинче ватлăхра, инвалид пулнипе тата тăрантарса пурăнакана çухатнипе тӳлекен страховани пенси илекенсен шучĕ 329 пине яхăн, çав шутра 85 проценчĕ ватлăхра паракан пенси илсе тăрать.

Февралĕн 1-мĕшĕнчен ватлăхра паракан страховани пенсийĕсен виçи вăтамран 1200 тенкĕ ӳсрĕ – 11600 тенке çитрĕ, инвалидсене паракан пенсийĕсен виçи вăтамран 700 тенкĕ ӳсрĕ – 7100 тенке çитрĕ, тăрантарса усракана çухатнипе тӳлекен пенсийĕсен виçи вăтамран 800 тенкĕ ӳсрĕ –7400 тенке çитрĕ.

Пенси тӳлеме республикăра уйăхсерен каякан тăкак 380 миллион тенкĕ ӳсрĕ.

<u>Олег Прокопьев:</u> **Çулталăк вĕçлениччен пенсисем тата ӳсеççĕ-и? Çĕнĕ саккунпа ĕçлекенсен пенсийĕсене ӳстермелли йĕрке сыхланса юлнă-и?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Çĕнĕ саккунпа ку йĕрке сыхланса юлнă. 2015-мĕш çулхи августăн 1-мĕшĕнчен пенсисене малтанхи йĕркепех 2014- мĕш çулта пенси шутланă чух е ӳстернĕ чух кĕмесĕр юлнă страховани взносĕнчен шутласа

ӳстеретпӗр (корректировкă тăватпăр). 2016-мӗш çултан вара августăн 1-мӗшӗнчен пенси коэффициент шутне ӳстерсе пенсие хăпартатпăр. Пенсие ӳстерме 3 балл таран шута кӗрет - тепӗр майлă каласан, 22 -23 пин тенкӗ таран шалу укçинчен пенси хăпарать.

**<u>Олег Прокопьев:</u> Юлашки вăхăтра ӗçлекен пенсионерсене пенси тӳлеме пăрахас ыйтăва сӳтсе яваççӗ. Ку мӗнпе çыхăннă?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Ку ыйтăва малтанах пенси тытăмне аталантарас вăрăм сроклă Стратегинче палăртнă. Стратеги тапхăрăн-тапхăрăн пурнăçа кӗрсе пырать. Кăçал ак пенсисене çӗнӗ формулăпа шутлама тытăнтăмăр. Çитес вăхăтрах ӗçлекен пенсионерсене пенси тӳлес ыйтăва пăхса тухма палăртнă. Тӗрӗссипе каласан, пенси вăл - ӗçлеме пултарайман çынна тӳлекен страховка. Хальхи нормăпа пенсионер ӗçлет те, пенсине те пӗтӗмпех илет.

**<u>Олег Прокопьев:</u> Пенсионерсем нумайӗшӗ сахал укçа тӳлекен ӗç вырăнӗсенче ӗçлеççӗ, çамрăксем унта ӗçлеме килӗшмеççӗ.**

<u>Роза Кондратьева:</u> Чăнах та çамрăксем кун пек ӗç вырăнӗсенче ӗçлесшӗнех мар. Çавăнпа та уйăхне 83 пин тенкӗ - çулталăкне 1 миллион тенкӗ шалу илекен пенсионерсене кăна пенси тӳлеме чарасси пирки калаçу пырать. Халлӗхе ку ыйтупа нимӗнле йышăну та çук. Ун пек тупăш илекен пенсионерсем сахал, çавăнпа та пенсионерсене нумайăшне ку пырса тивмест.

**<u>Олег Прокопьев:</u> Тăван çӗршывăн Аслă вăрçинче çӗнтернӗренпе 70 çул çитнӗ ятпа ветерансене тӳлевпе тивӗçтерме палăртнă. Республикăра ку ӗçе мӗнле йӗркеленӗ?**

<u>Роза Кондратьева:</u> Раççей Федерацийӗн Президенчӗн февралӗн 26-мӗшӗнчи 100-мӗш номерлӗ Указӗпе килӗшӳллӗн Тăван çӗршывăн Аслă вăрçинче çӗнтернӗренпе 70 çул çитнӗ ятпа ветерансене пӗр хут тӳлевпе тивӗçтерме палăртнă.

Пенси фончĕ тӳлеве йĕркелеме списоксем хатĕрлерĕ – Чăваш Республикинче 25 пин ветеран çак тӳлеве илме тивĕçлĕ. Вĕсене апрель уйăхĕнче пенсипе пĕрле 3 пин е 7 пин тенкĕ тӳлеççĕ.

**<u>Олег Прокопьев:</u> 7 пин тата 3 пин тӳлеве республикăра камсем илме тивĕç?**

<u>Роза Кондратьева:</u> **<u>7 пин тенкĕ</u>** илме Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсемпе инваличĕсем, вăрçăра е кайран вилнĕ вăрçă участникĕсен тăлăх арăмĕсем е упăшкисем, «Блокадăри Ленинградра пурăннă çынна» паллăпа наградăланисем, концлагерьсен тата геттосен çул çитмен çамрăк узник пулнисем тивĕç.

**<u>3 пин тенкĕ</u>** илме Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн орденсемпе медальсене тивĕçнĕ çынсем е вăрçă вăхăтĕнче тылра 6 уйăхран кая мар ĕçленисем, нацистсен концлагерĕсенче çул çитнĕ çамрăксем узник пулнисем тивĕç.

**Тавтапуç, Роза Алексеевна. Тепĕр передачăсенче çĕнĕ пенси формулине тата пухăнса пыракан пенсине йĕркелес пирки тишкерĕпĕр.**